Ыйтусене хамăрăнах татса памалла

# Юлашки çулсенче Муркаш сăн-сăпачĕ палăрмаллах улшăнчĕ. Анчах...

– Шупашкартинчен пĕрре те кая мар кунта, – района килекен хăнасенчен час-часах илтме пулать çак сăмахсене. Анчах та çак тирпей-илем хăй тĕллĕн çӳлтен татăлса анманнине те лайăх пĕлеççĕ районта пурăнакансем: тирпей-илеме хамăрăнах тумалла. Çавăнпа та иртнĕ эне кун пулса иртнĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхсен район пуçлăхĕ çумĕнчи Канашĕн ларăвĕнче чи малтанах ялсене тирпей-илем кĕртес ыйтăва пăхса тухнинчен тĕлĕнме кирлех мар. Юлашки вăхăтра ялсем патĕнче çӳп-çап куписем пысăклансах пыни те ку ыйту районта çивĕч тăни çинчен калать. Вырăнсенче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем ку тĕлĕшпе халăхпа ĕçлеççĕ-ха. Анчах та çынсем те тĕрлĕрен вĕт, çунтарма май пур япаласенех урама кăларса пăрахаççĕ: кун пеккисемшĕн килте тирпейлĕ пултăр, урамра мĕн йăваланса выртни пăшăрхантармасть вĕсене.

– Муркашра та пĕчĕк «свалкăсем» тĕл пулсах тăраççĕ. Сĕт-çу завочĕ патĕнче те пĕр вăхăт асăрхама пулатчĕ ăна. Малиновка вăрманĕнче икĕ «свалка» пулса ларчĕ, – тет Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин.

Проблемăна кунта çӳп-çап контейнерĕсем лартса парса татма тăрăшни те пуриншĕн те меллĕ мар иккен: Çĕньял Муркашра ял пуçне вырнаçтарнăскер патне акă пурин те çӳп-çапа унта сĕтĕрес килмест-мĕн.

Çӳп-çапа турттарнишĕн те чупса пырсах никам та укçа тӳлесшĕнех мар. Хамăршăн пĕтĕм ĕçе ыттисем тата тӳлевсĕр тусан камшăн япăх пулĕ. Анчах та хамăр ял тирпейлĕхĕшĕн хамăрах яваплине ăнланмаллах пирĕн. Кăçалхи декабрь уйăхĕнче районта çӳп-çап тăкмалли çĕнĕ полигон хута каймалла. Ялсенчи кирлĕ мар ăпăр-тапăра мĕнле турттармалла унта? Çак ыйту та айккинче юлмарĕ ларура. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене тирпей-илем ыйтăвĕ хумхантарни савăнтарать.

– Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн машинисемпе турттарсанах вырăнлăччĕ. Ыттине вырăнсенче эпир йĕркелетпĕр. Çакăншăн укçине пуçтарнă пулăттăмăр, – теççĕ вĕсем.

Ларура Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн ертӳçи Н.А. Шишкин çакна валли транспорт çителĕклĕ пулнине палăртрĕ. Чăнах та, çӳп-çапа ялсенчен ятарлă графика килĕшӳллĕн турттарни вырăнлă пулмалла. Николай Александрович ĕçсен тарифĕсене тăвассипе ĕçленине палăртрĕ. Палăртмалла, ăна халăха юрамалла тума тăрăшаççĕ кунта. Николай Александрович каланă тăрăх, çӳп-çапа уйрăм çынсем хăйсен машинисемпе те турттарма пултараççĕ. Машинăсем ĕç хыççăн дезинфекци витĕр тухĕç. Полигонра пĕтĕм ĕçе çирĕп контроллесе тăма палăртаççĕ. Кам, хăçан, ăçтан, мĕн чухлĕ çӳп-çап илсе килни йăлтах учетра пулать. Енчен те предпринимательсем пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхпа килĕшӳ туса ĕлкĕреймен пулсан, кунтах касса ĕçлĕ: çӳп-çапа тирпейленĕшĕн укçине тӳрех вырăнти кассăра тӳлеме май пулать. Николай Александрович полигон мĕнле йĕркепе ĕçлесси çинче тĕплĕн чарăнчĕ.

– Ялсем çӳп-çап айне пулни никамшăн та чыслă мар. Пирĕн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме майсем те çителĕклĕ, кăмăл та пур, - терĕ район пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. Никитин калаçнине пĕтĕмлетнĕ май.

Пĕрремĕш ыйтупа халăха шывпа тивĕçтерессине те пăхса тухрĕç. Ку тĕлĕшпе те районта татса памалли тупăнсах тăрать. Ку енĕпе Юнкă, Катькас, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенчен тĕслĕх илмелли вара пур.

Чăннипех те, ял тăрăхĕсен паян мĕн тĕрлĕ ыйту татса памалла мар пулĕ.

– Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ялта йытă персе çӳрени килĕшӳллех мар пуль. Ку ĕçе пурнăçлакан уйрăм ушкăн йĕркелесен районта питĕ вырăнлă пулмаллаччĕ, – терĕ Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.В. Ермаков кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйтăва пăхса тухнă май.

Вырăнти чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ертӳçи Н.С. Яковлев ку татса пама май пур ыйту иккенне палăртрĕ. Çавăн пекех вăл выльăхсен чирĕсемпе кĕрешессипе пирĕн район республикăра лайăххисен шутĕнче пулни, апла пулин те профилактика ĕçне куçран вĕçертме юраманни çинчен каларĕ.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхсен район пуçлăхĕ çумĕнчи Канашĕн ларăвĕнче ытти ыйтусене те пăхса тухрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

## Ватăсем те айккинче юлмаççĕ



***Сăн ӳкерчĕкре эсир Муркашра пурăнакан Василиса Константиновнапа Алексей Павлович Васькиновсене куратăр. Иккĕшĕ те пенсире вĕсем. Çулĕсемпе çамрăках мар пулин те, ытти хăш-пĕр пенсионерсем пек хваттерте алă усса ларса вăхăта ирттермеççĕ, май уйăхĕнчен тытăнса куллен Муркаш урамĕсене çӳп-çапран, тĕрлĕ тасамарлăхран тасатма ĕçе тухаççĕ. Ытларах вара çакă укçашăн та мар, чун туртнипе.***

***Вăрттăнлăх мар, хальхи вăхăтра пирĕн хушăра тасалăхпа тирпейлĕх епле пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланса çитерейменнисем те сахал мар. Вĕсемшĕн пулсан ăçта килчĕ унта пушă кĕленче-савăт, тĕрлĕ ăпăр-тапăр пăрахса хăварни темех мар. Халĕ шутласа пăхар-ха: пурте çавăн пек хăтланма тытăнтăмăр пулсан, мĕн пулса тухĕ-ши? Çавăнпа та кун пек çынсем куллен урамсенчи тĕрлĕ тасамарлăха пуçтаракансем çине те «çӳлтен» пăхаççĕ пулĕ. Анчах та кун пеккисен чи малтанах çавăн пирки шухăшласа пăхасчĕ: хăйсем вĕсем тасалăхпа тирпейлĕхшĕн мĕн те пулин тунă-ши-ха?***

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Ялти çӳп-çапа ăçта чикмелле?

Районĕпех çӳп-çапа вырнаçтарас ыйту çивĕч тăни паллă ĕнтĕ. Ку тĕлĕшпе палăрăмлă улшăнусем те пулса иртмеççĕ мар. Сĕнтĕрти çӳп-çап тăкмалли вырăн тулса çитнĕ май унпа усă курма чараççĕ. Кăçалах вара Ивановка патĕнче йăла каяшĕсемпе çӳп-çап вырнаçтармалли 12 гектар лаптăк йышăнакан полигон хута каймалла.

Ку япăх мар тейĕпĕр. Анчах та ку полигона кашни ялтанах çӳп-çап турттарса тăрассине йĕркелесси иккĕлентерет. Тата çитменнине эпир паянхи кунпа пурăнатпăр вĕт-ха. Унччен ăçта чикмелле хуçалăхри пĕтĕм ăпăр-тапăра?

Акă пирĕн Çатракасси ял тăрăхĕн территорийĕнче çынсем унччен çӳп-çап тăкнă вырăнсене илемлĕ табличкăсем вырнаçтарса тухнă: «Çӳп-çап тăкмалла мар. Штраф» тесе палăртнă вĕсем çинче. Çынсен вара халĕ кĕленче, пластмасса банкăсемпе савăтсене, ытти çӳп-çапа, ăпăр-тапăра ăçта кайса тăкмалла-ши? Çунаканнине килти хуçалăхрах çунтарма пулĕ-ха. Анчах та апла туни те ыйтăва татса памасть. Тавралăхшăн питĕ сиенлĕ тесе палăртаççĕ çакна специалистсем.

Хăш-пĕр ял тăрăхĕсенче уйрăм ялсем валли çӳп-çап тăкмалли ятарлă вырăнсем уйăрса параççĕ. Ытларах чухне вĕсем – шыв çурса кайнă вырăнсемпе шырлансем. Кайран вара пухăннă çӳп-çапа пусăрăнтарса тăпрапа хупласа пыраççĕ. Пирĕн патра та çапла тума май çук-ши? Çӳп-çап тăкма чарни ыйтăва татса пани пулмасть вĕт-ха.

**Çатракассинче пурăнакансем.**




**Сăн ӳкерчĕкре: шел, çӳп-çапне ăçта тăкмаллине табличкăра çырса хума «маннă».**

Пенси ыйтăвĕсемпе

# Патшалăх пенси виçине ӳстерме пулăшать

**– Граждансене патшалăх енчен финанслассин программи мĕн-ха вăл?**

– Кунта сăмах патшалăх пулăшнипе çынсен пулас пенсийĕсен виçине ӳстерме май пурри пирки пырать. Енчен те эсир хăвăрăн пулас пенсин пухăнакан пайĕ çине çулталăкне 2000 тенкĕрен тытăнса 12000 тенкĕ таран куçаратăр пулсан, çавăн чухлех сумма Пенси фондĕнчи сирĕн счет çине патшалăх куçарса парать.

***Пĕтĕмпе: 12000 тенкĕ > çулталăкне 24000 тенкĕ.***

Ĕç паракан та сирĕн пенси виçине ӳстерме хутшăнма пултарать. Уншăн ăна налуксем тӳлессипе çăмăллăхсем параççĕ.

***Пĕтĕмпе: 12000 тенкĕ > çулталăкне 36000 тенкĕ.***

Программăна 2013 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр хутшăнмалла. Ăна гражданин пĕрремĕш взноса куçарса панăран тытăнса 10 çуллăха палăртнă.

**– Программăпа килĕшӳллĕн пенсин пухăнакан пайĕ çине укçа-тенкĕне мĕнле куçармалла-ха?**

– Кирек епле кредит учрежденийĕ урлă хăвăрах куçарма пултаратăр. Реквизитсене палăртнă квитанци бланкне Пенси фончĕн районти управленийĕнче илмелле.

Çак ĕçе хăвăра ĕçпе тивĕçтерекене те шанма юрать. Сирĕн заявленипе килĕшӳллĕн бухгалтери уйăхсерен палăртнă суммăна Пенси фондне куçарса тăрĕ.

***Анчах та манма кирлĕ мар: программăпа килĕшӳллĕн 2009 çулта сирĕн счет çине куçарнă пĕтĕмĕшле взнос 2000 тенкĕрен кая пулмалла мар. Çавăн чухне кăна эсир патшалăх пулăшăвĕ çине шанма пултаратăр.***

Енчен те эсир пенси виçине ӳстермелли патшалăх программине хутшăнас тетĕр, анчах та хальлĕхе взноссене куçарса паман пулсан, çак ĕçе 2009 çул вĕçлениччен туса ирттерме тăрăшăр. Ун чухне 2010 çулхи май уйăхĕнчех Пенси фондĕнчи сирĕн счет çине патшалăх пулăшăвĕн сумми килсе çитĕ.

Хальлĕхе вара çакăн пеккине те час-часах курма пулать. Чылайăшĕ пенси виçине ӳстермелли патшалăх программипе усă курма ыйтса Пенси фончĕн районти управленине заявлени çырса парать, хыççăн вара ку е вăл сăлтавпа взноссем куçмаççĕ. Кун пек чухне патшалăх пулăшăвĕ çине шанни кăлăхах.

Çулталăк пуçланнăранпа патшалăх пулăшăвĕпе усă курса хăйсен пенси виçисене ӳстересси пирки 553 çын заявлени çырса панăччĕ. Анчах та 420 çыннăн взноссем куçмарĕç. Çавăнпа та вĕсене взноссене çулталăк вĕçлениччен куçармалли пирки пĕлтерсе çырупа тухма тиврĕ. Вĕсем взноссене пĕр тăхтаса тăмасăр куçарма тăрăшасса шанас килет.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ.**

Ыйту – хурав

## Вăтам шкул пĕтериччен кăна

***Кăçал манăн ача пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкултан вĕренсе тухрĕ, аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕчĕ. Хăй вăл 18 çул тултарман-ха. Хăçанччен мана ачана пăхса пурăннăшăн паракан пособипе тивĕçтерĕç-ши?***

**Л. АЛЕКСЕЕВА.**
Ярославка ялĕ.

Районти социаллă хӳтлĕх пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, ача пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкултан вĕренсе тухрĕ пулсан, хыççăн вăл ăçта та пулин вĕренме кĕнине пăхмасăрах, пособи тӳлеме пăрахаççĕ. Кунпа пĕрлех ача пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкула пĕтернĕ хыççăн малалла вĕренме кăмăл тумасть е ĕçе вырнаçать пулсан та пособи тӳлемеççĕ.

## Пурăнма кирлĕ минимум таран

***Манăн аппан хĕрĕ тăрантараканне çухатнине пула 1950 тенкĕ пенси илсе тăрать. Пенси законодательствине кĕртекен çĕнĕлĕхсемпе килĕшӳллĕн унăн пенсийĕн виçи мĕн чухлĕ ӳсесси пирки каласа параймăр-ши?***

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Паллă ĕнтĕ, кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенсисен база пайĕ 31,4 процент ӳсмелле. Апла пулсан сирĕн аппан хĕрĕн вăл 2562 тенкĕ пулмалла. Анчах та çак сумма пенсионерăн пурăнма кирлĕ республикăри чи пĕчĕк шайĕнчен каярах пулнă май (çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ăна 3910 тенкĕ çирĕплетнĕ), ăна хушса 1348 тенкĕ социаллă тӳлев пама пуçăнĕç (3910–2562). Аса илтеретпĕр: заявлени çырма кирлĕ мар, пенси виçине унсăрах хăпартса параççĕ.

Редакци почтинчен

## Тĕлĕнтермĕш вăрманта

Кĕркунне икĕ тапхăртан тăрать: ылтăн тата хура. Нумайăшĕ ылтăн кĕркуннене мухтать. Анчах та ылтăн кĕркунне кăна мар, хура кĕркунне те хăйне май илемлĕ.

Нумаях пулмасть эпир аннепе вăрмана çул тытрăмăр. Эпир вăрман патне çывхарнă чух вăрманти çулçăсем хăйсен çепĕç сассисемпе ырлăх-сывлăх суннăн туйăнчĕ. Йывăççем çинче юлашки çулçăсем çакăнса тăраççĕ. Епле илемлĕ хура кĕркунне вăрман ытамĕнче! Лантăш çырлисем сана кĕтнĕн туйăнаççĕ. Варкăш çил вĕрнипе вĕрене çулçисем санăн хыççăн чупаççĕ. Ытти çулçăсем юрă юрласа, ташă ташласа параççĕ. Тĕлĕнтермĕш вăрмана çитсе куртăмăр эпир! Юманпа шĕшкĕ тункатисем çинче уплюнкка кăмписем çине-çинех шăтса тулнă. Вăл кăмпасем тунката çинче çеç мар, çĕр çинче те чылай. Эпир аннепе хамăрăн карçынккасене кăмпапа часах тултартăмăр.

Карçынккасене йăтма тăтăмăр та ниепле те йăтаймастпăр. Ахальтен мар ĕнтĕ ваттисем : «Кĕр мăнтăрне ут турта таймасть», - тенĕ. Чăнах та, хамăр тултарнă карçынккасене киле аран йăтса çитертĕмĕр.

**Н. ПЕТРОВА,**
**4-мĕш класра вĕренекен.**
Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул.

Вулакан пултарулăхĕ

## Кĕрхи сăнсем

Кĕрхи йăваш хĕвел кулли,
Ӳкеççĕ шăппăн çулçăсем...
Кĕтмен çĕртен тӳпе тулли
Капланчĕç ăмăр пĕлĕтсем.

Пуçларĕ çумăр ташшине,
Сив çил вăранчĕ ыйхăран.
Силлет, авать туратсене,
Кăра мĕн кăмăлĕ паян.

Ял пĕвинче кăна хурсем
Ишеç шыва чăма-чăма.
Инçе каяççĕ сассисем –
Вĕсемшĕн шыв чăн ыр
çăтмах.

Кĕре хавас ял çыннисем,
Ăна чыслаççĕ пуç тайса.
Çĕн çăкăра алла илсе
Касаççĕ ăшшăн йăл кулса.

Ырми-канми ĕçленĕрен
Тулли, пуян халь пӳлмисем.
Шур хĕл иртсе çур çитиччен
Иртейĕç лăпкăн кунĕсем.

**Игорь МАЙКОВ.**
**Кашмаш ялĕ.**